Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

# Черетлĕ вырма хыçа юлчĕ

– Мĕн палăртнине пурнăçларăмăр. Хирти тырă кĕске хушăрах йĕтем çине кĕчĕ. Халĕ ăна кĕлетсене хурассипе тимлетпĕр. Ларса канма вăхăт çук. Акă тата ачасен те çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçăнать. Çавна май вĕсен ку таранченхи пулăшăвĕ те сахалланать. Ачасем пур чухне ĕçлеме те савăнăçлăччĕ, – терĕ хиртен илсе килнĕ тырра йĕтем çине пушатнă чух тырă турттаракан Николай Викентьевич Волков водитель **(сăн ӳкерчĕкре)**.





Унăн сăмахĕсене ачасен савăнăçлă сасси татрĕ. Йывăр-и, çăмăл-и – ачасен савăк сасси ĕçлеслĕхе ӳстерет, мал туртăмлă ĕçлеме хавхалантарать. Йывăрлăхсем вĕсем – вăхăтлăх, савăк кулă вара – ĕмĕрлĕх. «Айтăрха ала агрегатне ĕçсĕр лартмастпăр», – чĕнчĕ юлташĕсене кăçал Орининти вăтам шкула 9-мĕш класа вĕренме каякан Ирина Федотова **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре сылтăмри)**. Унăн сăмахĕсемпе 11-мĕш класа каякан Алена Васильевапа çак шкултан кăçал вĕренсе тухнă тата Мускаври гуманитарипе экономика институчĕн Шупашкарти филиалне вĕренме кĕнĕ Оксана Родионова килĕшрĕç. Çамрăксен звени савăнăçлă та мал туртăмлăн ĕçе кӳлĕнчĕ.

– Хамăр вĕренекенĕмĕрсем çапла ĕçленине пăхма кăмăллă. Вĕсенчен ырă çынсем ӳсессе шанатпăр, – терĕ Патаккасси йĕтемĕ çине агитбригада ушкăнĕпе савăк ташă-юрă илсе килнĕ Татьяна Петровна Алексеева вĕрентекен.

Агитбригада тенĕрен, ку ушкăна пĕтĕмпех Орининти вăтам шкулта ĕçлекенсенчен йĕркеленĕ. Ирина Германовна Скворцова, Надежда Рудольфовна Иванова, Римма Лазаревна Мокшанова, Татьяна Петровна Алексеева, Фаина Петровна Александрова **(виççĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)** хуçалăхра ĕçлекенсем патне кăçалхи вырмара пайтах концертсемпе тухрĕç. Владимир Михайлович Александров баянист тата кĕвĕçĕ кашни концертах илемлĕ тума тăрăшрĕ. Çăкăрпа çеç тутă мар çав ĕçлекен çын. Оринин тăрăхĕнче çакна тĕпе хурса ĕçлерĕç вырмара. «Оринино» хуçалăх иртнĕ канмалли кунсенчех вырма ĕçĕсене вĕçлерĕ.



**А. ПЕТРОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Пирĕн истори

# Районăн малтанхи фельдшерĕ

Икĕ уйăх каялла пирĕн районта Республика кунĕ иртни паян та асран тухмасть. Муркаш Ен çак чыса тивĕçни çĕр ĕçченĕсене паян вырмара тăрăшулăх кăтартма хистет.

Район администрацийĕнчи Муркаш Ен аталанăвне кăтартакан стенда пăхсан тата хам пĕлсе тăнăран, анчах «Муркаш районĕ. Кĕске энциклопеди» кĕнекере çав ята тупайманран республика кунĕ умĕн районăмăр историйĕнче тарăн йĕр хăварнă тепĕр çын ятне çынсем патне çитерес терĕм. Вăл – районăн малтанхи фельдшерĕ, Муркаш тăрăхĕнче халăх сывлăхне сыхлас ĕçе пуçарса яраканĕ, район больницине никĕслекенĕ Анисим Павлович ИШТЫРГАНОВ. Чăвашсен йĕркипе тата тăванлăх паллипе эпĕ ăна пичче тетĕп, мĕншĕн тесен Анисим Павлович манăн аттен шăллĕ, вĕсен тата Янăша качча кайнă Евтотти аппăшĕ пулнă. Вĕсен ашшĕ Кашмашра халĕ пурăнакан Мушки Васлисен килçурчĕ вырăнĕнчен тухнă. Мушки килте кĕçĕнни пулнăран кил хуçине юлнă. Анисим Павлович та пурăна-киле уйрăлса тухнă. Шел те, анчах çемье пурнăçĕ аталанса каяйманран 82 çул тултарсан пирĕнтен уйрăлнă пиччен йăхĕ малалла тăсăлайман, Иштырган-сен пĕр юппи историе юлнă.

Анисим Павлович Иштырганов Шурча вулăсне кĕрекен Кашмаш ялĕнче 1895 çулта чухăн, анчах малашлăха пăхакан, çĕнĕ пĕлӳшĕн çунакан хресчен çемйинче çуралнă. Каламалла, унăн ашшĕпе амăшĕ çĕр ĕçне юратакан çирĕп чăвашсем пулнă. Çавăнпа ялта пит çуках та пурăнман. Çĕнĕ ĕмĕр çывхарнине сиссе çак хресченсем ачисене хутла вĕрентесси пирки те пĕрре мар шутланă. «Хутла вĕренсен çĕр ĕçне те, ял пурнăçне те самай çĕнетме пулать», – тесе манăн асатте çул çитсен ачисенчен пултаруллăраххине Униççене чиркӳ çумĕнчи шкула вĕренме ярать. Çăмăл пулнă-и, йывăр-и – Униççе шкул çулĕсене тӳсĕмлĕ чăтса ирттерсе шкултан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухать. Вĕрентекенсем унăн çырав ĕçне пысăк хак панăран шкул пĕтернĕ çамрăка Шурча вулăсĕн писарĕ пулма ĕçе вырнаçтараççĕ. Пĕлӳ çулĕн уççине алла илнĕ Униççе мĕн вĕреннипе çеç çырлахмасть, Хусанти медицина институчĕн фельдшерсем хатĕрлекен уйрăмне, хальхи пек каласан, заочнăй майпа вĕренме кĕрет. Ял пурнăçне ырă улшăнусем илсе килес ĕмĕтлĕ тата мал туртăмлă çамрăк унтан та ăнăçлă вĕренсе тухса алла хăй фельдшер пулса тăнине çирĕплетекен хут илет. Çапла вара Кашмаш каччи вулăсри пĕрремĕш фельдшер пулса тăрать.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче вулăсра пульница пулман. Выçлăха, революципе вăрçăна тата йывăр ĕçсене пула тĕрлĕ чире кайнă хутла пĕлмен çынсем çăлăнăç тата пулăшу ыйтса чиркĕве çеç çӳренĕ. Ялта вăхăтсăр вилекенсем йышлă пулнăран çамрăк фельдшер валли ĕç çителĕклех пулнă. Хăй Турра ĕненекен çын пулнă пулин те, чиркĕве çӳресе сывалайман çынсене Анисим Павлович хăйĕн килĕнче йышăнма пуçланă. Халăх чĕлхине те (чăваш мотти тейĕпĕр) лайăх пĕлнĕрен, фельдшер хăйĕн сиплев ĕçĕнче унпа та тухăçлă усă курнă. Нумай-нумай эмелсене Анисим Павлович хăйĕн укçипе туяннă е хатĕр препаратсенчен килти условисенче эмелсем хатĕрленĕ. Хатĕрлев ĕçĕнче таврари курăксемпе, улма-çырлапа анлă усă курнă.

1926 çулта Муркаш чиркĕвĕ çунса кайсан патшалăх страховани укçи пысăк сумма уйăрнă. Ку вăхăта халăх хушшинче тĕрлĕ шухăш пулнă: страховани укçине чиркӳ тума ямалла е чирлисене сыватма пульница çĕклемелле. Ăна-кăна тума та укçи çитсе каймасть. Вара страховани укçипе Анисим Павлович фельдшер халăх хушшинче пульница туни вырăнлăрах тесе пысăк ăнлантару ĕçĕ туса ирттерет. Вăл çине тăрса тимленипе чиркӳ çунса кайнăшăн патшалăх панă страховани укçипе тата ытти пулăшусемпе усă курса Муркашра йывăçран пульница туса лартаççĕ. Анисим Павлович тинех чирлисене ятарлă çĕрте йышăнма пуçлать. Тĕрлĕ чирсемпе пынă çынсем – Анисим Павлович вара малтанхи вăхăтра пĕр туxтăр çеç пулнă. Каларăм ĕнтĕ, чирлисене эмелпе те, халăх чĕлхипе те сиплеме пултарнă вăл. Çакна астăвакансем пирĕн тăрăхра халĕ те пур. Çатракассинче пурăнакан, тăххăрмĕш теçеткене ярса пуснă Никитин Кĕркури аса илнинчен: «Вар-хырăм аптăранипе пульницана кайрăм. Тухтăрсем пăхкаларĕç те операци тумалла терĕç. Уннчен Анисим Павловича тĕл пулнăскер тата тĕрĕслев хыççăн вăл хăйĕн патне кĕме ыйтнăран, çур сехетрен ватă тухтăр алăкне кайса шаккарăм. Кăмăллă йышăнчĕ Анисим Павлович. Пӳлĕме кĕрсенех вăл мана пĕр стакан шыв ĕçтерчĕ. Тем ĕçтерчĕ, анчах паян кун та нимĕн те ыратмасть».

Мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен пульницара халăх сывлăхĕшĕн тăрăшать Анисим Павлович, вуншар-çĕршер çын пурнăçне çăлса хăварать. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çулĕсенче вăл хирурги ĕçĕсĕр пуçне йăлтах хăйĕн аллине илнĕ, çынсен сывлăхĕшĕн пĕр шанчăк пулнă. Çынсем ун патне пынă, пынă та йăнăшман... Хăйĕн ĕçĕнче пысăк авторитет пулса вăй хунă Анисим Павлович патне яланах йывăр чирлисем кĕме тăрăшнă, унăн сĕнĕвĕсене вĕсем çывăха илнĕ, пурнăçланă. Хăй ĕçне наука шайĕнче пĕлнĕскер, халăхăмăр чĕлхинчен те ютшăнман. Мĕн пĕлнипе йăлтах халăх сывлăхĕшĕн усă курнă.

Патшалăх унăн ĕçне пысăка хурса хакланă, тивĕçлĕ канăва тухсан ăна персональнăй пенси памалла тунă. 82 çула çитсе çут тĕнчерен уйрăличченех Анисим Павлович халăх хушшинчен татăлман, çынсене пулăшма тăрăшнă.

**Анисим Павловичăн тăванĕпе Вячеслав Иванович ИВАНОВПА калаçса пичете Анатолий БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

Иккĕмĕш тĕнче вăрçи вĕçленнĕренпе – 63 çул

# Паян та мир хӳтĕлевĕнче



1945 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕ. Совет çарĕсем Хĕвел тухăçĕнче Японин Квантун çарĕсене çапса аркатнă хыççăн Çĕр планета çинче иккĕмĕш тĕнче вăрçи вĕçленнĕ. Вăхăт малалла иртнĕ май унăн ахрăмĕ хыçаларах та хыçаларах юлса пырать. Унпа пĕрлех çав çулсен чăнлăхĕ ытларах та ытларах ума тухать. Вăл вăрçă хăрушлăхĕ çулсем иртнĕçемĕн те асран каймĕ. Унта хутшăннисем паян та хамăр хушăмăртах пулни вăрçă хăрушлăхĕ пирки самантлăха та манма памасть.

Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Милютакассинче пурăнакан Хлебниковсем патне тирпейлĕх хуçаланнинчен тĕлĕнсе кĕретĕп. Ăнланатăп, çакă вăл паян 81 çул тултаракан Леонид Николаевич хăйĕн вăйĕпе тӳрремĕнех тунă пулăм мар, анчах ку тирпейлĕхре Аслă вăрçă участникĕн тӳпи çук тесе те калаймăн. Вĕсем мăшăрĕпе сакăр ача (5 хĕрпе 3 ывăл) çуратса тĕрĕс воспитани парса ӳстернин çимĕçĕ курăнать те ĕнтĕ çак тирпейлĕхре.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин йывăрлăхĕ Раççейри кашни çыннах пырса тивнĕ. Фронтра салтаксем нумай вилни тăшмана çĕнтерме кунсерен çĕнĕ вăй ыйтнă. Çапла вара 1927 çулхи августăн 30-мĕшĕнче кун çути курнă Милютакасси каччи Леонид Николаевич Хлебников та çĕр-шыв ыйтнипе 1944 çулхи ноябрьте салтак шинелĕ тăхăнать.

– Çемьере эпĕ асличчĕ те, вăрçă вут-çулăмĕ мана та аййкинче хăвармарĕ. Çĕр-шыв чĕнĕвĕ пире Хĕвел тухăçне илсе кайрĕ. 1945 çулхи май уйăхĕнче Çĕнтерӳ тусан эпир яппун çарĕсемпе çапăçасси пирки шутламанччĕ те, анчах лару-тăру лăпках марри те сисĕнетчĕ. Кĕçех пире, тар шăрши пĕлмен 18 çулхи салтаксене, фашистсене çĕнтерсе Хĕвел анăçри фронтран таврăннă 1909, 1910, 1921 çулсенче çуралнă салтаксенчен тăракан çар чаçĕсене хушрĕç. Вĕсем ăна-кăна ăнкарнă пулас та пире куççуль витĕр çар ĕçне вĕрентетчĕç. Эпир вара – ĕнерхи ачасем – макăрма та пĕлместпĕр. Вĕсем вĕрентни тата куççуль юхтарни Квантун çарĕсем çине атакăна кайсан йăлтах куç умне тухрĕ. Эпĕ разведбатра мотоцикл çинче автоматчик пулса. Пĕр пĕчĕк ялшăн çапăçни паян та асра. Тăшмансем сахаллăнччĕ, анчах вăйĕ пур. Эпир те хамăр вăя тивĕçлипе кăтартрăмăр. Нумай хирĕç тăраймарĕç – чакрĕç. Квантун çарĕсене хăваласа Маньжурирен Порт-Артура çитрĕмĕр. Унта вырăссем нумайччĕ. Вĕсемпе инçетри тăвансемпе калаçнă пек нумай сăмахларăмăр, тав сăмахне те илтрĕмĕр, – аса илет ветеран.

Ял çыннисем çур акире тырă акнă вăхăтра 1951 çулта Л. Хлебников тăван яла таврăнать. 1952 çулта Агния Филипповнапа çемье çавăрать. Мăшăрĕ 4 çул каялла çĕре кĕнĕ. Паян 81 çулхи Леонид мучи 12 мăнукпа 6 прамăнук илемĕпе киленсе пурăнать.

**А. БЕЛОВ.**

Прокуратура материалĕсем тăрăх

# Вандалист

2008 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнче район сучĕ Калуга хулинче 1986 çулта çуралса ӳснĕ, юлашки вăхăтра Çатракасси ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнче пурăннă Евгений Юрьевич Орлов тĕлĕшпе пуçарнă уголовнăй ĕçе пăхса тухрĕ. Мĕнпе айăпа кĕнĕ-ха аякран килнĕ хăна?

... Măн кун умĕнхи уяр кунсем. Çынсем тăрăшсах ял хушшисене, кил-тĕрĕшсене аслă праçнике хатĕрленсе тасатаççĕ. Çынсем килте те ялта тирпей-илем кĕртессипе ĕçленĕ чух çак «ĕмĕт-тĕллевсемпе» урăхларах пăхакансем те пулнă кăçал.

Апрелĕн 24-мĕшĕ. Сехет йĕпписем 11-мĕш сехетпе пыраççĕ. Каç сĕмĕнчен хăракан çамрăк арçын унталла-кунталла пăхса илет те хăй тахçанах тĕллесе хунă «ĕçе» пикенет: вил тăприсем çинче харсăрланма мехел çитерсе «ял паттăрĕ» плоскогубципе тата гайка уççисемпе (гаечные ключи) «ăста ĕçлесе», общество йăли-йĕркине пăсса, 1977 çулта çĕре кĕнĕ Г. Матвеевăн вил тăпри çине вырнаçтарнă палăкран сăн ӳкерчĕк вырнаçтармалли 100 тенкĕ тăракан тимĕр рамкăна кăларса илет. Никам кансĕрлемен вырăнта «хастар» каччă хăйĕн пуçарăвне пĕрре тунă вандалла ĕçпе чараймасть. Пуяс-тăк пуяс терĕ пулĕ ĕнтĕ çиччĕ виççе пăхма ӳркеннĕ «паттăр». Кĕçех унăн аллине 1976, 1995, 1980, 1984, 1979, 1982, 1988, 1975 çулсенчи вил тăприсем çинчи тепĕр палăкпа 7 хĕрес çинчен сăн ӳкерчĕк валли вырнаçтарнă 100-шер тенкĕлĕх тата 50-шер тенкĕлĕх тимĕр рамкăсемпе тимĕр табличкăсем кĕреççĕ. Çакă çитнĕ тетĕр-и çĕре кĕнĕ çынсенчен кулакан çынна? Çук. Е. Орловах 2008 çулхи çу уйăхĕн 12-мĕшĕнче 4 сехет иртсен Шупуç ялĕнче вырнаçнă «Очăкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕн ĕçлемен котельнăйĕн складне алăк çинчи хăмана кăларса ют пурлăха вăрттăн вăрлас тĕллевпе пырса кĕрет те электродвигателĕн 900 тенкĕ тăракан стартерне, пĕр метрĕ 252 тенкĕ тăракан электрокабеле 18 метр шахвăртса тухса каять.

Саккуна пăсса тата вилнисенчен кулса-мăшкăлласа пуяс тенĕ çыннăн çулĕ вăрăма каяйман. Район сучĕ унăн хăтланăшĕсене саккун енчен тивĕçлĕ хак парса тата айăплавсене хушса Евгений Юрьевич Орлова икĕ çул ĕçлесе юсанмалла, ĕç укçин 15 процентне патшалăха тытса юлма приговор йышăнчĕ.

Çапла вĕçленчĕ çĕрлехи «паттăр» вандалистăн çул çӳревĕ.

**А. ПЕТРОВ.**